28-мĕш сул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ИЮНЬ
9
ШАМАТКУН
110(6961) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

РСФСР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VI-мĕш сессийĕ

РСФСР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VI-мĕш сессийĕн 1945 çулхи июнĕн 6-мĕшпе 7-мĕшĕнчи ларăвĕсем çинчен

ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРУ́

Июнĕн 6-мĕшĕнче, кăнтăрла 11 сехетре Кремльте, Кремльти Асламăш Дворецра РСФСР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VI-мĕш сессийĕн 2-мĕш ларăвĕ пуласа иртнĕ.

Ларăва РСФСР Верховный Совечĕн Председателĕ **А. А. Жданов** депутат председатель пулса ертсе пынă.

Кун йĕркинче—РСФСР-ĕн 1945 çулхи государство бюджечĕ çинчен тата РСФСР-ĕн 1943-мĕшпе 1944-мĕш çулсенчи государство бюджетне пурнăçа кĕртни çинчен тунă доклада сӳтсе-явасси.

Пренисенче çаксем тухса калаçă: **П. С. Тарасов** депутат (Волоколамск округĕ, Мускав облаçĕ), ĕççынни депутачĕсен Горький область Совечĕн исполкомĕн председателĕ **В. Е. Педьов** юлташ, **З. А. Андреева** депутат (Сĕрпӳ округĕ, Чăваш АССР-ĕ), РСФСР Вырăнти промышленность Халăх Комиссарĕ **В. П. Смирнов** юлташ, **И. Н. Бурдин** депутат (Красноярск ялĕ округĕ, Красноярск крайĕ), **Г. Г. Измайлова** депутат (Пăва округĕ, Тутар АССР-ĕ), **И. М. Кузнецов** депутат (Очерск округĕ, Молотов облаçĕ), ĕççынни депутачĕсен Кострома область Совечĕн председателĕ **А. В. Куртов** юлташ, **В. И. Водосекин** депутат (Свердловск-Сталинск округĕ, Свердловск облаçĕ), **А. П. Газзаев** юлташ (Сурçĕр-Осетин АССР-ĕ), **И. П. Бойцов** депутат (Калинин округĕ, Калинин облаçĕ), РСФСР Верховный Совечĕн VI-мĕш сессийĕн 4-мĕш ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларăва РСФСР Верховный Совечĕн Председателĕн заместителĕ **А. Х. Тынчеров** депутат председатель пулса ертсе пынă.

Кун йĕркинче — РСФСР-ĕн 1945 çулхи государство бюджечĕ тата РСФСР-ĕн 1943-мĕшпе 1944-мĕш çулсенчи государство бюджетне пурнăçа кĕртни çинчен тунă доклада сӳтсе-явасси.

Пренире çаксем тухса калаçă: РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ **А. Н. Косыгин** юлташ, **И. Т. Гришин** депутат (Кораблински округ, Рязань облаçĕ), РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи культурăпа сутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсен Комитечĕн председателĕ **Т. М. Зуева** юлташ, ĕççынни депутачĕсен Тамбов область Совечĕн исполкомĕн председателĕ **И. П. Кузнецов** юлташ, РСФСР Сутĕç Халăх Комиссарĕ **В. П. Потемкин** юлташ, Саратов область Совечĕн исполкомĕн председателĕ **П. С. Кузьмин** юлташ, **К. А. Зимина** депутат (Смольный округĕ, Ленинград хули), РСФСР Совнарком çумĕнчи Промысла кооперацийĕн управлени начальникĕ **П. Ф. Кравчук** юлташ, **Г. Х. Бумагин** депутат (Кингисепп округĕ, Ленинград облаçĕ).

РСФСР Верховный Совечĕн VI-мĕш сессийĕн 4-мĕш ларăвĕ çаканпа хупăнать.

* * *

Июнĕн 6-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре РСФСР Верховный Совечĕн VI-мĕш сессийĕн 3-мĕш ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларăва РСФСР Верховный Совет Председателĕ **А. А. Жданов** депутат председатель пулса ертсе пырать.

Кун йĕркинче—РСФСР-ĕн 1945 çулхи государство бюджечĕ çинчен тата РСФСР-ĕн 1943-мĕшпе 1944-мĕш çулсенчи государство бюджетне пурнăçа кĕртни çинчен тунă доклада сӳтсе-явасси.

Пренисенче çаксем тухса калаçă: РСФСР Сывлăх Халăх Комиссарĕ **А. Ф. Третьяков** юлташ, **А. С. Трифонов** депутат (Тюмень хула округĕ, Тюмень облаçĕ), **М. И. Сафонов** депутат (Тихвин округĕ, Ленинград облаçĕ), **Ш. Р. Хакимова** депутат (Стерлитамак округĕ, Пушкăрт АССР-ĕ), **Д. В. Майоров** депутат (Пушкин округĕ, Мускав хули), **А. А. Баранов** депутат (Минеральные Воды округĕ, Ставрополь крайĕ), **М. А. Чембулатов** депутат (Темниковски округ, Мордва АССР-ĕ), РСФСР Вырăнти Топливо промышленноçĕн Халăх Комиссарĕ **А. М. Прокофьев** юлташ, **В. И. Лебедев-Кумач** депутат (Фрунзе округĕ, Мускав хули).

РСФСР Верховный Совечĕн VI-мĕш сессийĕн 3-мĕш ларăвĕ çаканпа хупăнă.

* * *

Июнĕн 7-мĕшĕнче, кăнтăрла 11 сехетре Кремльте, Кремльти Асламăш Дворецра

РСФСР Финанс Халăх Комиссарĕ А. А. Поскочов юлташ РСФСР-ăн 1945 çулхи государство бюджечĕ çинчен тулă доклад тăрăх пулнă пренисем

АНДРЕЕВА ЮЛТАШ СĂМАХĔ

Депутат юлташсем! РСФСР Верховный Совечĕн VI-мĕш сессийĕ 1945 çулхи государство бюджетне пăхса тухма историллĕ пăлăн кунсенче пухăнчĕ. РСФСР Верховный Совечĕн сессийĕ мирлĕ вăхăтра пулса иртет. Халĕ ĕнтĕ тупăсем пеме чарăнчĕç, çапăçу хирĕнче юн юхмасть, хĕрарăмсене чуралăх тата машкăл хăратмасть, ачапăча пурнăçне палач алли хăратса тăмасть. Отечественнăй аслă вăрçă çĕнтерӳпе вĕçленчĕ, аркатса тăкнă гитлерла Германи çинче Çĕнтерӳ ялавĕ вĕлкĕшет. Халăхсен чи аслă руководителĕ Сталин юлташ ертсе пынине Хĕрлĕ Çар пĕтĕм тĕнчипе пăлăн историллĕ çĕнтерӳ турĕ. **(Алă çупаççĕ).** Совет халăхĕ пирĕн тĕрĕс ĕç çĕнтерессине пĕр иккĕленмессĕр шанса тăчĕ, вăл çак шанчăка шикленӳпе асапсем витĕр, çапăçу хирĕсенчи вăхăтлăха пулнă ăнăçсăрлăхсем витĕр илсе тухрĕ. Пирĕн халăх совет стройне никам та çĕнтерме пултарас çуккине, Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинчи иксĕлми туслăха ĕненсе тăнă, аслă çулпуçăн — Сталин юлташăн полководецла гениййĕ пире çĕнтерӳ патне илсе пырассине пĕлсе тăнă. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Çĕнтерӳ хĕвелĕ çутă. Вăл çапăçу хирĕсенче тăкнă юнпа тата тылра ывăнма пĕлмесĕр ĕçленипе çирĕпленнĕ туслăха, халăхсен аслă туслăхне çутатса тăрать. Совет халăхĕсен çемьинче чи хăватли аслă вырăс халăхĕ, çак ертсе пыракан халăх пулса тăрать.

Сталин юлташ вырăс халăхне Совет Союзне кĕрекен мĕнпур халăхсем хушшинчи чи палăк наци тесе хакланнине, ăна пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсем хушшинче Совет Союзĕн ертсе пыракан вăйĕ вырăнне хурса хакланипе эпир, Россия Федерацине кĕрекен ытти халăхсен представителĕсем, вырăс халăхĕпе тивĕçлипе савăнатпăр. Аслă Совет Союзĕнче пурăнакан мĕнпур халăхсем вырăс халăхне çав тери юратса шанса тăраççĕ.

Вырăс халăхĕ мĕнпур национальноçсен халăхĕсене хăй тавра пĕтĕçтерчĕ. Ĕлĕхи Российăри кая юлнă вăйсăр халăхсене вырăс халăхĕ ĕмĕрхи нушалăхран тухса хайсен культурине, государственноçне тума, экономика тĕлĕшпе çирĕпленме пулăшрĕ.

1945 çулхи июнь уйăхĕнче Чăваш республики 25 çул тултарать. Çак çулсем хушшинче большевиксен партийĕпе Совет правительстви пирĕн халăхшăн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшрĕç. Чăваш республикин çитĕнĕвĕсем аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшса пынипе пулнă.

Аслă вырăс халăхне çав тери юратнипе Чăваш республикинчи ĕççыннисем Сталин юлташ патне çырнă çырура палăртрĕç:

«Сывăхран та сывăх Сталин,
Çут хĕвелĕмĕр, тавах:
Вырăс халăх чанĕпе эс
Çутран пирĕн мухтава.
Вырăс халăхĕ хăватлăн
Вăй парса тăчĕ ялан.
Пире те çунат сармашкăн
Пур халăхсемпе пĕртан:
Амăрт кайăкла вĕсмешкĕн
Сенкер пĕлет айĕнче,
Юнашар тăрса ӳсмешкĕн
Халăхсемĕр йышăнче».

Пусмăрлаха хирĕç пыракан кĕрешӳре промышленноçĕпе ялхуçалăхне аталантарма пулăшрĕ.

Чăваш республикине Горький хулинчи рабочисем питĕ пысăк пулăшу пачĕç, вĕсене ун чухне Жданов юлташ ертсе пыратчĕ. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).** Çирĕм пилĕк пин рабочи шучĕпе пынă вырăс рабочийĕсем пирĕн патăрта сахал мар колхозсем организациленĕ. Пирĕн писательсене вырăссен аслă писателĕ Максим Горький хавхалантарпă.

Вилсе пĕтес хăрушлăхран большевиксен партийĕ çăлса хăварнă, Октябрь революци тивлечĕпе çунатланнă чăваш халăхĕ, вырăс халăхĕн организацилесе ертсе пыракан вăйне пула, хăйĕн вăй-хăватне туянчĕ. Çак вăя пула чăваш халăхĕ, СССР-ти ытти халăхсемпе пĕрле, Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнчи пур йывăрлăхсене те çĕнтерме пултарчĕ.

Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсемпе никам аркатайми туслăхпа сыхăнса тăракан чăваш халăхĕ тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртсе пынă, халĕ те пурнăçа кĕртсе пырать. Чăваш халăхĕн ывăлĕсем Отечественнăй вăрçă кунĕсенче хăйсем паттăр воинсем пулнине, хăйсен халăхĕн тивĕçлĕхне сӳле çĕкленме пултарнине кăтартса пачĕç. Совет Союзĕн Геройĕсем 37 çын, Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă 22.000 воин—чăваш халăхĕн мухтавĕ пулса тăраççĕ. Чăваш республикинчи ĕççыннисем Совет Союзĕн Геройĕ Боголюбов генерал-полковник пек, Совет Союзĕн Геройĕ Петров генерал-майор пек, Макаров, Трофимов, Марсельский генералсем пек çынсемпе тивĕçлипе мухтанаççĕ.

Большевиксен партийĕ ертсе пынипе, совет патриотизмĕн иксĕлми вăйĕ хавхалантарнипе, пирĕн халăх тылра вăйне шеллемессĕр, паттăрăн ĕçлесе, тăшмана çĕнтерме Хĕрлĕ Çара пулăшса тачĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн çĕнĕ предприятисем шăтса тухрĕç, пирĕн пĕтĕм промышленность фронта пулăшассишĕн ĕçлесе тачĕ. 1944 çулта пирĕн промышленность, 1939 çулпа танлаштарсан, продукци икĕ хут ытларах туса кăларчĕ. Шупашкар хулинчи предприятисем производствăна 5 хут ӳстерчĕç.

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенчи пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçри çитĕнӳсемпе Чăваш республикинчи колхозниксем тивĕçлипех мухтанаççĕ. Чăваш республикинчи колхозсем çав тери çирĕпленсе пынине пула, Отечественнăй вăрçă çулĕсенче вĕсем фронт паракан пур заданисене те, çĕршыв паракан пур заданисене те вăхăтра тата пĕтĕмпех тултарса пычĕç. Тырпул тухăçлăхне хăпартнине пула, Чăваш республикинчи колхоз хресченĕсем вăрçă пынă тăватă çул хушшинче государствăна иртнĕ пилĕк çул хушшинче панинчен 5,5 миллион пăт тырă ытларах пама пултарчĕç.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатнăшăн тата тырпул тухăçлăхне хăпартнăшăн Чăваш республики Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Хĕрлĕ Ялавне илме икĕ хут тивĕçлĕ пулчĕ.

Чăваш республикин бюджечĕ, советлă республикăсен мĕн пур бюджечĕсем пекех, Совет правительстви ĕççыннисен культурипе йăлине лайăхлатассишĕн тăрăшнине уçăн кăтартса парать. 1944 çулта культурăллă ĕçсем тума пĕтĕм бюджетран 78 процент чухлĕ укçа кайнă.

Депутат юлташсем! Эпĕ çак сессире Шупашкар хулине электроэнерги парса тăрас ыйтăва хускатасшăн. Ку ыйту пирĕншĕн пысăк вырăн йышăнать. Шупашкарти икĕ электростанци тĕрлĕ наркоматсене пăхăнса тăраççĕ, вĕсене çирĕппĕн ертсе пыни çук, вĕсем хăйсен планĕсене тултараймаççĕ. Шупашкарта вĕсене пĕрлештерсе тăракан пĕр учреждени тума, ăна электростанци наркоматне пăхăнтарма кирлĕ, тесе шутлатăп. Çак ыйтăва татса параччен, эпир коммуналлă хуçалăх наркоматĕнчен хулари дизеллĕ электростанцие пĕтĕмпех юсама ыйтатпăр.

Атăл леш енчи торф предприятийĕн ĕçне лайăхлатни кирлĕ, вăл электростанцисене топливо парса тăрать. Çав торф предприятийĕ электростанци ĕçне пĕрмаях чăрмантарса пычĕ. Росглавторф та, РСФСР вырăнти топливо промышленноçĕн наркомачĕ те хăйĕн торф предприятине техника енĕпе тивĕçлĕ пулăшу памарĕç.

РСФСР-ĕн вырăнти топливо промышленность наркомачĕн торф предприятине материалсемпе техника тĕлĕшпе пулăшассине халех вăйлатмалла.

Электроэнерги туса кăларас ĕçе вырăнти топливăпа усă курса ĕçлекен пысăкрах электростанцисенче пĕтĕçтермелле. Пирĕн торф запасĕсем Чăваш республикин Атăл леш енчи районĕсенчи промышленноçпа электроэнерги парса тăракан хăватлă станци тăвассине палăртса хума май параççĕ.

РСФСР Вăрман промышленноçĕн наркомачĕ пирки те пĕр ик-виç сăмах калаçа. хаварасшăн. РСФСР Вăрман промышленность наркомачĕ автомобильне тракторсем паркне лайăхлатас тата ӳстерес тĕлĕшпе кирлĕ пек тăрăшмасть. Тавата çул хушшинче Чăваш республикăн çынсем хулана каяççĕ.

Самолетсем çĕнĕ ушкăнĕ пырса ларать. Ку самолетсемпе Франци делегацийĕ çитрĕ. Делегацие Францин 1-мĕш армийĕн командующийĕ Делатр де Тассиньи генерал ертсе пырать.

Франци делегацийĕ хăйне пана вырăна вырнаçма каять.

Аэродром тĕлĕнче Великобритани самолечĕсем ушкăнĕ курăнса каять. Монтгомери фельдмаршал хăйĕн штабĕн начальникĕпе, аслă офицерсен ушкăнĕпе тата Стрэнг советникпе вĕсене килет. Пĕр-пĕрне саламлана хыççăн, Монтгомерипе Соколовский хисеплĕ хурал умĕне утса тухаççĕ.

Берлин хулин Венденшлос ятлă вырăнĕ. Кунта 17 сехетре союзлă тăватă державăн верховнăй главнокомандованийĕсен представителĕсем килсе çитеççĕ: Союзĕн Германири оккупацилле çарĕсен Главнокомандующийĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Г. К. Жуков ертсе пыракан Совет Союзĕн представителĕсем, армси генералĕ Д. Эйзенхауэр ертсе пынине Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен представителĕсем, Б. Л. Монтгомери фельдмаршал ертсе пынине Пĕрлешӳллĕ Королевствăн представителĕсем тата Делатр де Тассиньи генерал ертсе пынине Франци республикин Вăхăтлăх правительствин представителĕсем.

Жуков Маршал чěннине союзниксен представителĕсем канашлу залне кĕреççĕ.

Контроль Совечĕн ĕçне çаксем хутшăннă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ А. Я. Вышинский, А. А. Смирнов посол, армси генералĕ Соколовский. Армси генералĕ Эйзенхауэрпа пĕрле—политикăлла советник Мэрфи; Монтгомери фельдмаршалпа юнашар — политикăлла советник Стрэнг; Франци çар начальниксен хушшинче — Делатр де Тассиньи генерал.

Жуков Маршал ура çине тăрать:

— Совет Правительстви ячĕпе тата хам ятпа,—тет, вăл,— эпĕ хамăран хăнасене—Германи парăнни çинчен тата союзлă тăватă держава правительстисем верховнăй власа хăйсем çине илни çинчен калакан Декларацие çине алă пуснă кинĕ хамăран союзниксене саламлатăп.—Жуков Маршал Контроль Советне ĕçе тытăнма чĕнет.

Симĕс пуставна витнĕ çаврака сĕтел çинче вырăс, акăлчан, француз тата нимĕç чĕлхисемпе çырнă Декларацин текстчĕсем выртаççĕ. Верховнăй командованисен представителĕсем: Совет Союзĕн Маршалĕ Жуков, армси генералĕ Эйзенхауэр, Монтгомери фельдмаршал, Делатр де Тассиньи генерал хăйсен правительствисем хушшинче çав историллĕ документ çине алă пусаççĕ.

Çакăнтан пуçласа ĕнтĕ союзлă тăватă держава правительствисем Германире верховнăй власа хăйсем çине илеççĕ. Декларацин 15 статьинче паранна Германин пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртсе пымалли требованийĕсем çинчен калана.

Июнĕн 5-мĕшĕнче Мускав вăхăтĕпе 18 сехетре Германи парăнни çинчен тата союзлă тăватă держава правительствисем верховнăй власа хăйсем çине илни çинчен калакан Деклараци вăя кĕнĕ.

Жуков Маршал кăнтăрлахи ларăва хупни çинчен пĕлтерет те делегаци пуçлăхĕсене Германире контроль туса тăракан аппаратăн малашнехи ĕçĕсен ыйтăвĕсем çинче сӳтсе-явма канаплăва чĕнет.

* * *

Паян Жуков Маршал союзлă держава сен делегацийĕсен ячĕпе апатлану туса иртернĕ. Совет Правительстви Совет Союзĕн чи аслă наградине—Çĕнтерӳ орденĕпе армси генералне Эйзенхауэр, Монтгомери фельдмаршала тата 1-мĕш степень Суворов орденĕпе Делатр де Тассиньи генерала наградăлани çинче Жуков Маршал пĕлтерине хĕрӳллĕ ала çунса йышăннă. Наградăланисем ответ сăмахра хăйсене чыс туни тав тупа

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

СССР Верховный Совечĕн XII-мĕш сессине пухасси çинчен

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕн XII-мĕш сессине çак çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче Мускав хулинче пухас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1945 çулхи июнĕн 7-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

АРМИ ГЕНЕРАЛНЕ ДУАЙТ Д. ЭЙЗЕНХАУЭРА ТАТА ФЕЛЬДМАРШАЛА БЕРНАРД Д. МОНТГОМЕРИ СЭРА «ÇĔНТЕРӲ» ОРДЕНПА НАГРАДĂЛАССИ ÇИНЧЕН

Пысăк çапăçусем туса ирттерес ĕçре çав тери чаплă çитĕнӳсем тунăшăн тата çав çапăçусене пула вара Пĕрлешнĕ написем гитлерла Германие çĕнтернĕшĕн çаксене наградăлас:

«Çĕнтерӳ» орденпа

Армси генералне Дуайт **Д. Эйзенхауэра**

Фельдмаршала Бернард Лоу **Монтгомери** сэра.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1945 çулхи июнĕн 5-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

ДЕЛАТР ДЕ ТАССИНЬИ ГЕНЕРАЛА 1-мĕш СТЕПЕНЬ СУВОРОВ ОРДЕНĔПЕ НАГРАДĂЛАССИ ÇИНЧЕН

Пĕрлешнĕ нацисен пĕрлехи тăшманне—гитлерла Германие—хирĕç пынă кĕрешӳре Францин хĕçпăшалăлă вăйĕсен çапăçăвĕсене ăнăçлăн прттернĕшĕн Делатр де Тассиньи генерала 1-мĕш степень Суворов орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1945 çулхи июнĕн 5-мĕшĕ.

СССР 'ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

„1941-1945 çулсенчи Отечественнăй Аслă вăрçăра хăстарлă ĕçленĕшĕн" ятлă медаль тăвасси çинчен

1. Германие çĕнтернине яланлăхах палăртса хăварас тесе, «1941—1945 çулсенчи Отечественнăй Аслă вăрçăра хăстарлă ĕçленĕшĕн» ятлă медаль тăвас.

2. «1941—1945 çулсенчи Отечественнăй Аслă вăрçăра хăстарлă ĕçленĕшĕн» ятлă медальне çаксене наградăлас:

а) промышленноçри тата транспортри рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене;

б) колхозниксемпе ялхуçалăх специалисчĕсене;

в) наука, техника, искусство тата литература работникĕсене;

г) совет, парти, профсоюз тата ытти общественнăлă организацисен работникĕсене—хăйсене хăйсем хĕрхенмесĕр хăстарлă ĕçлесе тăрса, Совет Союзне Отечественнăй Аслă вăрçăра Германие çĕнтермелле тунăскерсене.

3. «1941—1945 çулсенчи Отечественнăй Аслă вăрçăра хăстарлă ĕçленĕшĕн» ятлă медаль çинчен çырнă положенине çирĕплетес.

4. «1941—1945 çулсенчи Отечественнăй Аслă вăрçăра хăстарлă ĕçленĕшĕн» ятлă медаль мĕнле пулмалли çинчен калаçнине çирĕплетес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июнĕн 6-мĕшĕ.

„1941-1945 çулсенчи Отечественнăй Аслă вăрçăра хăстарлă ĕçленĕшĕн" ятлă медальпе

ПОЛОЖЕНИЙĔ

1. «1941—1945 çулсенчи Отечественнăй Аслă вăрçăра хăстарлă ĕçленĕшĕн» ятлă медале пама предприятисен, учрежденисен, парти, совет, профсоюз тата общественнăлă ытти организацисен руководителĕсем панă документсем тăрăх ĕçсынни депутачĕсен хулари тата районри Совечĕсен исполнительнăй комитечĕсем тăратаççĕ.

2. «1941—1945 çулсенчи Отечественнăй Аслă вăрçăра хăстарлă ĕçленĕшĕн» ятлă медале пама тăратнă çынсен списокĕсене çаксем пăхса тухса çирĕплетеççĕ:

Промышленноçлă предприятисенчи, транспортри, совхозсенчи ĕççыннисем тĕлĕшпе — союзлă тата республикăсенчи тивĕçлĕ халăх комиссариачĕсен халăх комиссарĕсем.

Колхозсенчи, кооперацисенчи ĕççыннисем тĕлĕшпе тата парти, совет, профсоюз тата общественнăлă ытти организацисенчи ĕççыннисем тĕлĕшпе—союзлă (облаçсене пайланман çĕрте) тата автономиллĕ республикăсен Верховный Совет Президиумĕсен представителĕсем, ĕççынни депутачĕсен облаçсенчи тата крайсенчи Совечĕсен исполнительнăй комитечĕсен председателĕсем.

Наука, техника, искусство тата литература работникĕсем тĕлĕшпе — СССР Совнаркомĕ çумĕнчи тивĕçлĕ комитетсен председателĕсем тата союзлă, автономиллĕ республикăсен Совнаркомĕсем çумĕнчи управленисен начальникĕсем тата Совет Писателĕсен Союзĕн председателĕ.

3. «1941—1945 çулсенчи Отечественнăй Аслă вăрçăра хăстарлă ĕçленĕшĕн» ятлă медале СССР Верховный Совет Президиумĕ ячĕпе ĕççынни депутачĕсен награда илнĕ çын пурăнакан вырăнти область, район тата хула Совечĕсен исполнительнăй комитечĕсем параççĕ.

4. «1941—1945 çулсенчи Отечественнăй Аслă вăрçăра хăстарлă ĕçленĕшĕн» ятлă медале кăкăр çине сулахай енне çакса çӳремелле. Урăх орденсемпе медальсем те пулсан, ку медале «1941—1945 çулсенче Отечественнăй Аслă вăрçăра çĕнтернĕшĕн» ятлă медаль хыççăн çакмалла.

„1941-1945 çулсенчи Отечественнăй Аслă вăрçăра хăстарлă ĕçленĕшĕн" ятлă медаль мĕнле пулмалли çинчен çырса кăтартни

Медале йăсран çаврака тăваççĕ.

Медалĕн пичĕ енче—Совет Союзĕн Маршалĕн тумне тăхăннă И. В. Сталин юлташăн кăкăр таран ӳкернĕ сăнĕ пулать.

Медалĕн çӳлти пайĕнче çаврака тăрăх çапла çырнă: «Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç». Аялти пайĕнче «Эпир çĕнтертĕмĕр», тесе çырнă.

Медалĕн тепĕр енĕ çакăн пек: çаврака тăрăх— «Хăстарлă ĕçленĕшĕн», варринче —«1941—1945 çулсенчи Отечественнăй Аслă вăрçăра», тенĕ сăмахсем, аялти пайĕнче пиллĕк вĕçлĕ çăлтăр.

Медаль çинчи ӳкерчĕксем тата çырнисем саспаллийĕсем мăкăрăлчăк пулаççĕ.

Медаль пысăкăшĕ—диаметрпа шутласан, 32 миллиметр пулать.

Медаль ункă урлă пиллĕк кĕтеслĕ колодкăпа пĕрлешсе тăрать. Колодкине хĕрлĕ тĕслĕ муаровăй пурçăн хăюпа çăрнă. Хăю варринче 7 миллиметр сарлакăш симĕс йĕр, хăюн хĕррисенче сарă тĕсле ансăр йĕрсем пулаççĕ.

Çĕнтернĕ держăвăсен верховнăй командованийĕсен представителĕсем пĕрремĕш хут тĕл пулни

БЕРЛИН, июнĕн 5-мĕшĕ. **(ТАСС спецкорĕ).** Самолетсене вĕссе хăпармалли бетон сарнă çул çинче хисеплĕ хурал тăрать. Темпельгоф аэродромне Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Великобританин тата Францин государство ялавĕсемпе илемлетнĕ.

Мускав вăхăтĕпе 10 сехет те 45 чинут çитнĕ. Сывлăшпа мотор шавĕсем илтĕнме пуçласçĕ. Аэродром тĕлĕнче çаврăнса илнĕ хыççăн, пĕрин хыççăн тепри американецсен 13 самолечĕ анса ларать. Малтанхи машинăран арми генералĕ Эйзенхауэр тухать. Унпала пĕрле Мэрфи советник, Клей генерал, Гормлей адмирал тата ытти офицерсем тухаççĕ. Эйзенхауэра арми генералĕ Соколовский, Совет Союзĕн политикăлла советникăн представителĕ А. А. Смирнов посол, Берлин хулин комендантĕ Берзарин генерал-полковник, Боков генерал-лейтенант тата ыттисем те кĕтсе илеççĕ.

Эйзенхауэр генерал микрофон умне тухса çапла калать.

— Паян ирхине эпĕ Америка офицерĕсен ушкăнĕпе пĕрле Темпельгоф аэродромне антăм. Эпир Жуков Маршалăн хăнисем пулса килтĕмĕр. Хĕрлĕ Çар гăрçăра çĕнтерсе илнĕ территори çине аннипе эпĕ питĕ савăнатăп. Германие чĕркуççи çине лартас тĕлĕшпе çав тери пысăк ĕç тунă аслă çăран командирĕсемпе руководителĕсене çакăнта саламлани маншăн питĕ пысăк чыс пулать.

Оркестр Америкăпа Совет Союзĕн гимнĕсене выляса парать.

Эйзенхауэр генерал хисеплĕ хурал умĕне утса тухать. Çакăн хыççăн хисеплĕ хурал церемонийлĕ маршпа утса тухать.

Эйзенхауэр генерал хисеплĕ хурал начальникĕне—Совет Союзĕн Геройне В. Демченко гварди майорне тав туса çапла калать: хисеплĕ хурал çăран хăватне çакăн пек туллин палăргинине нихăçан та курман, тет. Эйзенхауэр тата унпа пĕрле

АНДРЕЕВА ЮЛТАШ СĂМАХĔН ВĔÇĔ

(Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

иккинчи вăрман промышленноçĕ тракторсем валли запаслă пайсем илмен. Çавна пула вăрманпромхозсенчи 30 тракторран пĕри те ĕçе юрăхлă мар; 51 автомашинăран 16 автомашина кăна юсавлă.

Чăваш республики чи паха изделисене хатĕрлесе туртăрса кăларас плана, çавăн пекех кăмăкпа сăрт-ту промышленноçĕ валли йывăç хатĕрлес плана итлапшипех тултарчĕ.

Чугун çул валли вутă хатĕрлес плана пурнăçланăпăн Чăваш республикинчи вăрман кадрсенсем Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çурекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Мăн шутпала, Чăваш республикинчи вăрман промышленноçĕ РСФСР наркомлесĕнчен пулăму ыйтма тивĕçлĕ пек туйăнать.

Атăлăн сулахай сыранĕнче, Шупашкар хули тĕлĕнче хăйăр питĕ нумай. Вăл хăйăр кĕленче-кантăк тума юрăхлă. 1942 çулта çав вырăнта изоляци материалĕсен заводне тума пуçланăччĕ, ăна РСФСР строительство материалĕсен наркомачĕ тăвать. 1944 çулта вăл ĕçе РСФСР-ăн граждăнла строительство наркоматне панă; вăл вара завода тăвас ĕçе пăрахрĕ те оборудование калăла илсе кайрĕ. Çĕршывра кантăк çав тери кирлĕ пулнине шута илсе, эпир РСФСР правительствинчен çак чарса лартнă стройкăна РСФСР строительство материалĕсен наркоматне калăла пама. 1945 çулта Чăваш республикинче кĕленче-кантăк заводне туса лартма ыйтатпăр. Вăл ĕçе ăнăçлă туса пама условисем пурте пур.

Депутат юлташсем! Сесси пăхса тухма тăратнă 1945 çулхи бюджета—çĕнтерӳ бюджетне, Россия федерацийĕн халăх хуçалăхĕ малалла аталанса пынине палăртакăн бюджета, эпĕ çирĕплетме сĕнетĕп.

Пирĕн государство вăйăпа вăрçă çулĕсенче ӳссе пычĕ. Тăшмана татăклăнах çĕнтернĕ вăхăта, вăрçă вĕçленнĕ вăхăта совет çĕршывĕ тата хăватлăрах, тата вăйлăрах пулса тăчĕ.

Пирĕн нумай наципе халăх, туслăхпа пĕрлешсе тăраканскер, вăрçă пĕтнĕ хыççăн, халăх хуçалăхне юсас ĕçе ку тараччăн пулнă хăвăртлăхсенчен пысăкрах хăвăртлăхсемпе туса пама пултарать. Çак ĕçе вăл кирек епле пулсан та пурнăçа кĕртĕ.

Совет правительствин ăслă политики тата пирĕн аслă çулпуç Сталин юлташ геннлле ертсе пыни çакна çирĕппĕн шанса тăма май парать. **(Алă çупаççĕ).**

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ ИЮНĔН 5-мĕшĕ ТĔЛНЕ ÇУРАКИ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Пĕтĕмлĕх акă	Çав шутран					
		Çĕрулми	Тăхăр-симĕс	Кăнтăр	Йĕтĕм	Махорка	Тăмăр-çимĕс мĕнле силос культурисем
1. Шупашкар	103,3	100,6	66,5	86,0	—	—	93,5
2. Муркаш	103,0	94,7	100,0	84,0	—	—	100,0
3. Вăрмар	103,0	103,0	102,9	87,5	—	—	222,2
4. Вăрнар	102,8	100,0	45,3	90,0	102,6	—	76,3
5. Сĕнтĕр	102,7	103,5	70,0	89,6	—	—	43,7
6. Шăхасан	102,0	100,5	100,0	82,8	—	—	102,5
7. Элĕк	101,9	100,1	105,0	78,1	—	—	85,9
8. Куславкка	101,8	101,1	58,8	57,5	—	—	100,0
9. Сĕнтĕрвăрри	101,7	102,5	60,0	70,0	—	—	23,5
10. Красноармейски	101,2	102,9	82,0	92,2	—	—	107,2
11. Ишлей	100,9	101,7	82,6	71,7	—	—	64,1
12. Етĕрне	100,9	10	76,0	91,7	69,2	—	106,3
13. Чкаловски	100,8	76,6	92,2	62,2	—	—	92,0
14. Калинино	100,7	95,1	84,2	91,1	—	—	65,3
15. Октябрьски	100,6	101,3	70,9	65,8	—	—	71,1
16. Советски	100,5	99,6	78,7	90,1	—	—	45,0
17. Çĕрпӳ	100,4	102,1	63,8	76,2	—	—	93,0
18. Тăвай	100,2	92,6	102,6	78,7	—	18,0	85,1
19. Канаш	100,1	97,7	86,1	57,0	—	—	39,8
20. Комсомольски	100,1	86,7	54,0	71,6	—	—	51,5
21. Чурачăк	100,0	107,3	86,3	86,2	—	19,1	80,0
22. Елчĕк	100,0	98,2	65,6	96,5	—	—	81,7
23. Шăмăршă	100,0	62,0	54,2	36,9	—	—	52,1
24. Çĕмĕрле	97,5	75,6	44,0	65,0	70,0	—	43,5
25. Хĕрлĕ Чутай	93,8	68,1	90,0	62,3	71,5	29,1	58,4
26. Первомайски	93,4	56,8	70,0	76,0	52,0	—	68,5
27. Йĕпреç	92,1	50,6	35,0	66,5	53,3	11,6	111,1
28. Кувакино	92,0	41,6	10,0	—	62,5	20,3	54,0
29. Пăрачкав	87,3	64,5	18,7	—	59,1	24,0	—
30. Улатăр	85,1	30,2	12,5	—	42,9	43,4	27,4

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕМ 1945 ÇУЛХИ ИЮНĔН 5-мĕшĕ ТĔЛНЕ ÇĔРТМЕ ТУНИНЕ КАТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Çĕртме тунă (процентпа)
1. Сĕнтĕр	41,4
2. Вăрнар	33,3
3. Красноармейски	27,4
4. Шупашкар	26,6
5. Ишлей	25,1
6. Сĕнтĕрвăрри	24,2
7. Çĕрпӳ	21,0
8. Куславкка	19,5
9. Шăхасан	17,5
10. Муркаш	16,7
11. Октябрьски	16,3
12. Елчĕк	14,3
13. Канаш	12,8
14. Вăрмар	12,6
15. Етĕрне	11,8
16. Элĕк	11,3
17. Калинино	8,9
18. Йĕпреç	7,8
19. Улатăр	7,5
20. Чкаловски	6,4
21. Чурачăк	4,7
22. Шăмăршă	3,1
23. Тăвай	2,1
24. Хĕрлĕ Чутай	2,1
25. Первомайски	2,1
26. Çĕмĕрле	1,6
27. Комсомольски	1,2
28. Кувакино	—
29. Пăрачкав	—
30. Советски	—

Шупашкарпа Комсомольски районсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă

Шупашкар районĕнчи колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 101 процент, сыснасем енĕпе 102 процент, сурăхсем енĕпе 132 процент тултарнă.

ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарĕ КАРАУШЕВ.
Шупашкар райисполкомĕн председателĕ МИРОНОВ.

* * *

Комсомольски районри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 100 процент, сурăхсем енĕпе 132 процент тултарнă.

ВКП(б) Комсомольски райкомĕн секретарĕ ГЕОРГИЕВ.
Комсомольски райисполкомĕн председателĕ МОЛОДЦОВ.
Комсомольски районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ МАЛЫШЕВ.

1 400 гектар ытла çĕртме тун,ссе

Ишлей районĕнчи малта пыракан колхозсем çĕртме тума тытăнчĕç. Ленин ячĕпе тăракан, «Родина», «Хачики» колхозсем çĕртме сухи тумалли плана çак кунсенчех тултараççĕ. Çакăнпа пĕрлех хăшпĕр колхозсем çум çумлас тата хире тислĕк кăларас ĕçсене те туса пыраççĕ. Акă «Красноармеец» колхоз 3 гектар çинчи вăрлăхлăх клевера çумкурăкĕнчен тасатнă.

В. ГУСЬКОВ.

Çулталăкри плана тултартăмăр

ÇĔРПӲ, июнĕн 8-мĕшĕ. (Телеграфпа) Машинно-тракторлă станцинчи рабочисен коллективĕ Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа социализмлă ăмăртăва тăнăнса, çĕртме тăвас ĕçе кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттересшĕн ĕрешет. Комсомолецсемпе çамрăксен 10-мĕш бригади 3 трактормпа пурĕ 1268 гектар сухаласа çулталăкри плана 105 процен тултарчĕ. Çак хушăра бригада 1.770 килограмм горючи перекетлерĕ.

СТЕПАНОВ,
10-мĕш трактор бригадин бригадирĕ.

ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ СОВЕТ ÇЫННИСЕМ, АНГЛИ ÇАРĔСЕМ ИРĔКЕ КĂЛАРНĂСКЕРСЕМ, МĔНЛЕ УСЛОВИСЕНЧЕ ПУРĂННИ ÇИНЧЕН

Великобритани посолĕ Арчибальд К. Керр сэр СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ С. А Лозовский юлташ патне çыру янă. Çав çырура вăл хăйĕн Правительстви ячĕпе портфельсĕр министр Ричард Лоу господин майăн 2-мĕшĕнче общинăсен палатинче калăнине совет хаçачĕсенче пичетлесе кăларма ыйтнă. Çав самаха Ричард Лоу СССР Совнаркомĕн репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнийĕ Голиков генерал-полковник тыткăна лекнĕ совет çыннисем. Англи çарĕсем ирĕке кăларнăскерсем, мĕнле условисенче пурăнни çинчен 1945 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕнче каласа панă пирки каланă.

Аяларахра Ричард Лоу господин калăнине пичетлетпĕр:

Ричард Лоу господин 1945 çулхи майăн 2-мĕшĕнче общинăсен палатинче калани

Ялтăри конференцире тунă килĕшӳре акăлчансен тыткăнра пулнă çар çыннисене, совет çарĕсен аллине лекнĕскерсене, çавăн пекех тата тыткăнра пулнă совет çыннисене, акăлчансен аллине лекнĕскерсене, мĕнле тыткаламалли çинчен каланă. Эпир, паллах, вăл килĕшĕве пурнăçа кĕртсе пыратпăр. Унсăр пуçне, эпир Англи çарĕсем ирĕке кăларинине пула хăйсен çĕршывне таврăнассине кĕтсе тăракан совет гражданĕсене лайăхрах пăхас тесе ятарласа уйрăм ĕçсем тунă, халĕ те тăваткăпăр. Юлашки вăхăтра хаçатсенче çак ыйтăва тĕрĕс мар çутатса панă пирки, эпĕ çак официальнăй отчетра ун çинчен тĕплĕн каласа пама шут тытрăм.

Континент çине çĕмĕрсе кĕнĕ кунран пуçласах наступлени туса пыракан Англипе Америка çарĕсем совет гражданĕсене пит нумай ирĕке кăларнă. Кунсăр пуçне, Италире тата Балкан çурутравĕнче чылай çынсене ирĕке кăларнă. Вăл çынсенчен нумайĕшĕ хăйсене ирĕке кăлариччен е ирĕке кăларнă вăхăтра ТОДТ организацийĕнче е нимĕçсен ытти организацийĕсенче ĕçленĕ; вĕсенчен нумайĕшĕ, нимĕç тумтирне тăхăнса, Германии çар соединенийĕсенче тăнă. Вăл çынсенчен нумайĕшне ирĕксĕрлесе нимĕç службине илнĕ. Вĕсене суйласа илес тата хăйсен çĕршывне ăсатиччен пăхса тăрас ĕç пĕтĕм ăывăлăхĕнче союзниксен çар влаçĕсем çине ӳкнĕ. Эпĕ савăнсах çакна калатăп: çак задачăна татса парас тĕлĕшпе пире Хĕвеланăç тата Хĕвелтухăç Европăна çак ĕçпе пынă совет офицерĕсем пулăшса тăчĕç. Вăл офицерсем совет гражданĕсем патне пырса курма пултарнă, вĕсем пурăнакан условисем çинчен калаçма пултарнă. Совет Союзĕнчи тата совет çарĕсем ирĕке кăларнă районсенчи Англи представителĕсем çакăн пек лайăх условисенче пулнă тесе калама май çук. Тăван çĕршыва ăсатассине кĕтсе пурăнакан çав совет гражданĕсене уйрăм лагерьсене вырнаçтарма тăрăшнă. Вăл лагерьсенче совет офицерĕсем командир пулса тăнă. Иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа 42.421 совет çыннине çав çĕршывран тата Вăтаçĕр тинĕс районĕнчен хăйсен çĕршывне ăсатнă. Кун сумне Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çарĕсем ирĕке кăларнă 14.565 çынна хушма юрать, вĕсене те Англи суднисемпе ăсатнă. Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви пана пĕр суднăна шутламасан, çав 56.986 совет граждани Англи влаçĕсем. Англишĕн питĕ кирлĕ ытти ĕçсене чакарса, Англи суднисемпе ăсатнă. Хĕвеланăç Европăри ытти совет гражданĕсене, суднăсем пулнă пулсан тата çак задачăна пурнăçлас ĕçре Совет правительстви пире пулăшма пултарнă пулсан, нумай маларах хăйсен çĕршывне ăсатнă пулăттăмăр. Англи çарĕсем ирĕке кăларнă совет гражданĕсене, хăйсен çĕршывне ăсатассине кĕтсе тăраканскерсене, лайăхрах пăхас тĕлĕшпе уйрăм ĕçсем тунă, совет влаçĕсемпе таччăн çыхăнса тăнă, вĕсем ыйтнисене, май килнĕ чухне, пурнăçа кĕртнĕ. Совет влаçĕсем пире вĕсен çарĕсем апрелĕн 21-мĕшĕ тĕлне 3.854 Британи çыннине ирĕке кăларни çинчен пĕлтерчĕç. Вăл шутран 3.639 çын Одессăри лагерьте пулнă. Вăл лагерь чи мала тухса тăракан пункт шутланать. Совет влаçĕсем унта Англин ирĕке кăларнă çар çыннисем патне яланах кĕрсе çӳреме Англи офицерĕсене ирĕк панă. Çак çынсене тăван çĕршыва илсе каяс тĕлĕшпе те акăлчансен суднисемпе кăна усă курнă. Кунсăр пуçне, тыткăна лекнĕ американецсен тата ытти союзниксен çар çыннисене, темиçе пин çынна, Одессăран илсе тухса кайнă. Вырăссем пирĕн çынсене пăхнипе килĕшмен çĕрте эпир çав ыйту пирки совет влаçĕсемпе калаçнă. Çапла майпа эпир çак ыйтусене пурне те татса пама шанатпăр.

* * *

Лоу господин калăнипе паллашнă хыççăн СССР Совнаркомĕн репатриапи тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнийĕ Ф. И. Голиков генерал-полковник ТАСС аллине справка пачĕ. Аяларах эпир çав справкăна пичетлетпĕр.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнийĕн

СПРАВКИ

Кăçалхи апрелĕн 30-мĕшĕнче эпĕ февралĕн 11-мĕшĕнче тунă килĕшĕве пăсни çинчен каласа панисене Лоу господин калани сирсе ямасть.

Англире 1.712 совет граждани пит йывăр условисенче тытса усранă виçĕ лагерь пуррине (вĕсене пирĕн представительсем тупнă) апрелĕн 3-мĕшĕнче Америка командованийĕн представителĕ Кенниг генерал сирĕплетсе панă. Çакăнпа пĕрлех вăл çав лагерьсенче совет гражданĕсене килĕшĕве пăсса тытса усранăшăн каçару ыйтнă.

Администраци представителĕ Америка полицийĕн полковникĕ Леффорти пирĕн представителе çапла каласа панă: çав лагерьсенче çынсене усрамалли условисене пăснине халех пĕтерсе лартăпăр, тесе шантарнă, çав лагерьсем пурри çинчен совет представителĕсене чăнахах та пĕлтермен, тенĕ.

Хăйсен территорийĕнче çак виçĕ лагерь пурри çинчен Англи влаçĕсем те пире пĕлтермен.

Эпĕ апрелĕн 30-мĕшĕнче çапла каланăччĕ: Англи территорийĕнче пулнă совет гражданĕсенчен 300 çынна яхăн çитмест, тенĕччĕ. Çак ыйту пирки 1945 çулхи январь уйăхĕнчен пуçласа пирĕн представительсем Англи влаçĕсене темиçе хут та каланă.

Апрелĕн 4-мĕшĕнче Англи çар командованийĕн представителĕ Фейербресс бригадир Ратов генерала тата совет консулне Кротова çапла каланă: Англи влаçĕсем чăнахах та тĕрлĕ вăхăтра 346 çынна лагерьсенчен илсе кайнă, тенĕ. Вĕсенчен 170 çынна Лондонри Польша правительстви аллине панă, 176 çынна вĕсен гражданствине пăхса тухма Англи лагерĕсенче хăварнă.

346 çын шутланакан ушкăнтан халĕхе 59 çынна кăна тăван çĕршыва ăсатнă. Ыттисене ку тараччăн те пирĕн алла паман.

Çапла ĕçсем тунипе Англи çар командованийĕ тыткăнран хăтарнă совет çыннисене тыткалас тата вĕсен гражданствине тепĕр хут пăхса тухас правăна хăй çине илнĕ.

Англин Египетри лагерĕсенче тыткăна лекнĕ совет çыннисене çав тери йывăр условисенче тытса усрани çинчен каланине те сирсе ярайман.

Р. Лоу господин Англи карапĕсемпе СССР-а ăсатнă совет гражданĕсен хисепĕ çинчен калани эпĕ кăтартнă цифрăсене, çавăн пекех тата Хĕвеланăç Европа территорийĕнчен пирĕн граждансене хăйсен çĕршывне питĕ вăрахăн ăсатаççĕ тенине сирсе яман. Ку ĕç те мар, çак цифрăсем вĕсем совет çыннисене хăйсен çĕршывне ăсатас ĕç вăрахăн пулса пынине кăтартса параççĕ: 1944 çулхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа 1945 çулхи май уйăхне çитиччен, тепĕр тĕслĕ каласан — 7 уйăх хушшинче, уйăхне вăтамран 6—8 пин çынна кăна ăсатнă.

2.

Килĕшĕве пăснипе кăтартакан çĕнĕ фактсем те пур.

1, Германи парăннă хыççăн Норвегире 74 пин совет çыннине ытла ирĕке кăларнă.

Ирĕке кăларнă хыççăн çийĕнчех нимĕçсен хĕçпăшаллă хуралĕн террорĕнчен тата нимĕçсем хуçа пулса тăнинчен хăтарас вырăнне, вăл çынсене, малтанхи пекех, нимĕçсен аллинче тыткăнра хăварнă.

Кăçалхи майăн 11-мĕшĕнче Норвегири тыткăнри совет çыннисене союзниксен командованийĕ ячĕпе радиопа каланинче çакăн пек требовани кăларса тăратнă:

«Норвегин е союзниксен хуралĕпе улăштарииччен нимĕç хуралĕ вырăнтах юлмалла».

Майăн 28-мĕшĕнче кăна, пирĕн Англири представительсем темиçе хут калана хыççăн кăна; Фейербресс бригадир Ратов генерала нимĕç хуралне улăштарни çинчен Союзниксен Верховнăй Главнокомандованийĕн Штабĕн пĕлтерĕвне кăтартнă.

Çав вăхăтрах майăн 24-мĕшĕнче шведсен «Афтонбладет» хаçачĕ çапла пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: Бернадотт (Шпецири Хĕрлĕ Хĕресĕн вице-председателĕ) тата союзниксен влаçĕсен представителĕсем Мушеэнри тыткăна лекнĕ вырăс çыннисен лагерьне пырса, вырăссене июнĕн 12-мĕччен апатлантарса пурăнма нимĕçсене хушса хăварнă. Çакă ĕнтĕ лагерьти влаçа нимĕç администрацийĕ аллинчех хăварнинне пĕлтерет.

Норвегирен килнĕ корреспонденцирен çакă курăнать: чылай лагерьсенче совет çыннисене хĕçпăшаллă нимĕçсемпе пĕрлех хăварнă. Кăçалхи февралĕн 11-мĕшĕнче тунă Килĕшĕвĕн пĕрремĕш статьи тăрăх, нимĕçсене совет çыннисенчен уйăрмалла пулнă. Халтан кайнă совет çыннисем, çĕтĕк-çатăк тумтир тăхăннăскерсем, пурăнма юрăхсăр бараксенче вырнаçнă, нимĕçсене лайăх казармăсене вырнаçтарнă.

Нимĕçсем Норвегире совет çыннисенчен çаплах машкăлласа пуласçĕ.

2. Хĕвеланăç Германире, унтан килнĕ нумай çынсем каласа панă тăрăх, союзниксен çарĕсем ирĕке кăларнă совет гражданĕсемпе тыткăна лекнĕ çар çыннисен пурнăçĕ халĕ те лайăхланман-ха, хăшпĕр вырăнсенче вĕсен пурнăçĕ çав тери йывăр.

Майăн 25-мĕшĕнче **Дахау, Альха** тата **Найхенау** лагерĕсенчен килнĕ Тонконогов, Ткаченко, Бочаров, Далецкий офицерсем тата Белоусов сержант каласа панă тăрăх, çав лагерьсенче пурăнакан темиçе пин совет çынни талăкра 250 грамм çăкăр тата пĕрер литр яшка кăна илсе тăраççĕ; лагерьсенче тиф чирĕ сарăлнă. медицина пулăшăвĕ çук. Майăн çиччи Франкфурт хулинчи тĕрмере концлагерьсенчен тарма тăнăшăн нимĕçсем хупса лартнă совет çыннисем халĕ те асапланаççĕ.

Майăн 27-мĕшĕнче Нойштадт хулинчи (Гольштейн провинцийĕ) лагерьсенчен тарса тухнă Козуля капитан пĕлтернĕ тăрăх, акăлчансен вырăнти влаçĕсем унти совет гражданĕсене апат-çимĕç çителĕклĕ таран памаççĕ. Вăл лагерьсенче 12 пин совет çынни шутланать. Англи командованийĕ килĕсене янă нимĕç салтакĕсем совет гражданĕсене вĕлереççĕ. Икĕ кун хушшинче кăна Нойштадт хули таврашĕнче 15 совет гражданĕн виллисене тупнă. Хулара юлнă нимĕçсен хĕçпăшаллă полицийĕ пĕр сăлтавсăрах совет гражданĕсене хĕнет, тĕрмесене хупа-хупа лартать.

Нойштадт хулинчи лагерьти йĕркесĕрлĕхсем çинчен Англи командованийĕн вырăнти представительне Нагловский капитана майăн 27-мĕшĕнче пирĕн представитель Логунов полковник каланă.

3. Апрелĕн 12-мĕшĕнче Голландин Тессель утравĕ çинчи тыткăна лекнĕ совет çыннисем восстани тунă. Вĕсем нимĕç гарнизонне пĕтерсе тăкнă та, утрав çине пырса çитнĕ нимĕç çарĕсене хирĕç вăйлă çапăçнă хыççăн, çав утрава пĕтĕмпех тытса илнĕ.

Хăйсен çитĕнĕвĕсене çирĕплетес шутпа, восстани тунă отрядăн командованийĕ апрелĕн 17-мĕшĕнче Па-де-Кале проливĕ урлă 4 çынна Англие пулăшу ыйтма янă. Вăл çынсем: Каркашадзе, Рахвиашвилли, Галошвилли, Мочалдзе. Кимĕпе Англи çыранне чиперех çитнĕ хыççăн вĕсене тытса пирĕн представительсен аллине панă. Отряда пулăшу паман.

Голландин «Анета» агентствин бюллетенĕ майăн 17-мĕшĕнче тухнă 33-мĕш номерĕнче çав отряд пĕр уйăх хушшинче пĕр пĕчченех паттăрăн çапăçнине çирĕплетсе панă. Голландири «хирĕç тăрса кĕрешекен шалти фронт» кăна пысăк мар отрядсем ярса пулăшма хăтланнă. Анчах вăл пулăшу ăнăçлă пулман.

3.

Р. Лоу господин тыткăна лекнĕ çар çыннисене хăйсен çĕршывне ăсатас тĕлĕшпе ĕçлекен офицерсен условийĕсем пĕр пек мар пулни çинчен калать.

Çакна калас пулать: Англипе Совет Союзĕ тунă Килĕшӳ тăрăх, Англи офицерĕсене Англин тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе гражданĕсене пухма организацийленĕ лагерьсемпе пунктсене кĕме ирĕк панă.

Вăл пунктсем çаксем: Одесса, Львов тата Волковыск.

Çак пунктсенче пуринче те Мускавран пынă Англи представителĕсем пулнă. Кунсăр пуçне вĕсем Люблинра та пулнă.

Фронтран акăлчансене çийĕнчех вăрçă хирĕнчен илсе тухса, тăван çĕршыва ăсатас шутпа Одессăри транзит лагерĕсене илсе кайнă.

4

Хальхи вăхăтра, тыткăна лекнĕ çынсене Хĕрлĕ Çарпа союзниксен çарĕсем хушшинчи линия урлă каçармалли плансине Галле хулинче алă пуснă хыççăн, çав ĕç урăх хăвăртлăхсемпе пулса пырать.

Майăн 23-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 4-мĕшне çитиччен эпир союзниксен командованийĕнчен 620.988 совет граждане йышăннă.

Çав вăхăт хушшинчех союзниксен командованийĕ аллине эпир çакăн чухлĕ çын панă: 17.266 акăлчан, 17.443 американец, 118.664 француз, 10.812 бельгиец, 6.034 голландец, 829 норвежец тата 21 Люксембург çыннисене панă.

(ТАСС).

США ПРЕЗИДЕНЧĔН ПРЕДСТАВИТЕЛĔ Г. ГОПКИНС ГОСПОДИН МУСКАВРАН ТУХСА КАЙНИ

Июнĕн 7-мĕшĕнче Мускавран США президенчĕн представителĕ Г. Гопкинс господин арăмĕпе пĕрле тухса кайнă.

Тĕп аэродромра Г. Гопкинс господина çаксем ăсатса янă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ М. М. Литвинов, СССР Наркоминделĕн протокол отделĕн заведующийĕ Ф. Ф. Молочков, СССР Наркоминделĕн США отделĕн заведующин помощникĕ В. И. Базыкин, çавăн пекех тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи посолĕ А. Гарриман господин тата посольство членĕсем, Великобритани посолĕ А. Керр господин, Китай республикин посолĕ Фу Бин-чан господин тата ытти сем те.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах Мускавран Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство секретарĕн помощникĕ Ч. Болен господин тухса кайнă.

СОВЕТ ОФИЦЕРĔСЕН УШКĂНĔ КОПЕНГАГЕНРА ПУЛНИ ÇИНЧЕН

КОПЕНГАГЕН, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Дани столицине Коротков генерал пуç пулса ертсе пынă совет офицерĕсен делегацийĕ çитнĕ. Копенгагенри халăх ăна июнĕн 1-мĕшĕнче питĕ хавасланса кĕтсе илнĕ. Темиçе çын çын совет офицерĕсене вĕсем аэродромран гостиницăна пынă çул çинче савăнса саламланă.

Аэродромра делегацие оборона министрĕ Бьерн Крафт, генерал Гертс, вице-адмирал Ведель, Англи генералĕ Дьюинг тата ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви представителĕсем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ. Оборона министрĕ хăйĕн саламăн сăмахĕнче паттăр Хĕрлĕ Çара тивĕçлипе мухтанă. «Совет Союзĕ аслă Сталин Маршал ертсе пынипе немĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешни пĕтĕм тĕнчене савăнтарчĕ, пусмăра лекнĕ халăхсем Совет Союзне тем пекех тав турĕç»,—тенĕ вăл.

Кăнтăрла Коротков генерала тата унпа пĕрле пынă офицерсене Христиан король йышăннă. Вăл Коротков генералтан Сталин Маршала салам калама тата Данире ирĕке кăларнăшăн тав тума ыйтнă.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ совет офицерĕсен ячĕпе апатлану туса ирттернĕ. Апатланура Дани премьер-министрĕ Буль, Дани правительствин членĕсем, Данин Совет Союзĕнчи посланникĕ Дессинг, çавăн пекех тата Англипе Америка хăнисем пулнă. Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Кристмас Меллер апатланура çапла каланă: «Дани правительстви паян пысăк хаваслăхпа хаклă хăнасене—ирĕклĕ тĕнчери чи чапа тухнă çарсен представителĕсене—йышăнать. Хĕрлĕ Çар представителĕсем пирĕн çĕршыв столицине малтанхи хут килсе кураççĕ. Эпĕ хам Борнхольм утравĕ çинче сире пирĕн çĕршыв гражданĕсем епле ăшшăн йышăннине куртăм»,—тенĕ вăл. Унтан Кристмас Меллер Хĕрлĕ Çара Дание ирĕке кăларма пулăшнăшăн тата Борнхольм утравне немĕç çарĕсенчен тĕплĕн тата хăвăрт тасатнăшăн тав тунă.

Июнĕн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕнче Копенгаген хулине, унта совет офицерĕсем пулнă ятпа, флагсем çакса илемлетнĕ.

НИМĔÇСЕН ПАЛЛĂ ПРОМЫШЛЕННИКНЕ ТЫТСА ХУПНИ

ЛОНДОН, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çар влаçĕсем Фриц Винтергофа тытса хупнă. Вăл Мюльгейм хулинчи (Рур облаçĕ) труба завочĕсен директор-распорядителĕ, гитлеровецсен паллă пуçлăхĕн Роберт Лейăн сывăх тусĕ пулнă. Винтергоф ют çĕршыв рабочийĕсене хыта асаплантарса тытса усранă.

ГИТЛЕР ГАУЛЕЙТЕРĔ ПУЛНĂ ВАГНЕР ХĂЙНЕ-ХАЙ ВИЛНĔ

ПАРИЖ, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви çапла пĕлтерет: Парижра Гитлерăн Эльзасра ĕçленĕ гаулейтерĕ Вагнер хăйне-хăй вилнĕ. Ăна пуçлăх пулмасть Делатр де Тассиньи генерал çарĕсем тытнă та Парижа тĕрмене хунмашкăн илсе килнĕ пулнă.

ЛИВАНПА СИРИРИ ЛАРУ-ТАРУ

БЕЙРУТ, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Паянтан пуçласа Ливанра забастовкăсем чарăннă. Пурнăç ялăхи йĕркене кĕрсе çитнĕ. Дамаск хулинче-ăпкă. Дамаск хулинчен пур француз учрежденийĕсем те урăх çĕре куçнă. Франци салтакĕсем пĕр казармăра кăна юлнă. Англи командованийĕн генералĕ Дамаскра çапла пĕлтернĕ: хула çыннисене каçхине 9 сехетрен пуçласа ирхине 6 сехетчен урама тухма юрамасть, тенĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июнĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа кашни кунах сасăллă, илемлĕ çĕнĕ фильм

«ЧЕЛОВЕК № 217»

кăтартать.

Сеанссем 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре пуçланаççĕ.

Билетсене малтанах илсе хума юрать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, издательство конторин — 0—23.

НТ 00356

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000